Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* N24 (4593) *1998 çулхи февраль (нарăс) уйăхĕн 28-мĕшĕ, шăматкун* *Палăртнă хакпа.*

## Газификаци - тĕп тимлĕхре

Газификаци ыйтăвĕсем тĕлĕшпе иртнĕ çулталăкри канашлура çак ĕçе анлăлатмаллине палăртни çинчен эпир çырнăччĕ ĕнтĕ. Район ертÿçисем ку ыйтăва ялана тĕп тимлĕх уйăраççĕ. Тĕпрен илсен, районта газ кĕртекен подряд организацийĕсемпе ĕçлĕ çыхăнусем тытасси анлăланать, администраци çак ыйтăва татса парассипе хуçалăх ертÿçисене тĕплĕ те çине тăрса ĕçleме хистет. Çакна ку эрнере администрацире пулнă канашлу та уççăн кăтартса пачĕ. Администраци пуçлăхĕн капиталлă строительство енĕпе ĕçлекен çумĕ Н.Б.Мулюков ирттернĕ канашлăва "Востокмонтажгаз" АО генеральнăй директорĕн çумĕ Н.П.Зотов, 14-мĕш МСУ участокĕн начальникĕ П.В.Дунаев, районти газ службин ертÿçисемпе специалисчĕсем хутшăнчĕç, унта çаплах хресченсен хуçалăхĕсен ертÿçисенчен чылайăшне йыхăрнăччĕ. Газ кĕртессине хăвăртлатассинче подрядчикпа заказчик пĕр-пĕрне ăнланни пысăк вырăн йышăнать пулсан, хуçалăхсенче газовиксене ĕçсен кирлĕ калăпăшĕпе тивĕçтернипе пĕрлех вĕсене пурнăçлама йĕркеллĕ условисем тăвассишĕн те тăрăшмалла. Ку енĕпе çак ĕçре тивĕçлĕ активлăх кăтартман хăшпĕр ертÿçĕсемпе çивĕч калаçу пулчĕ.

Çав вăхăтрах ĕçшĕн тÿлес ыйтусене те тĕп тимлĕхре тытмалла. Финанс ыйтăвĕсене татса парассишĕн пуçлăх хăй тăрăшать пулсан, пÿртсене тата хваттерсене газ кĕртнĕшĕн хуçисем хăйсем тÿлемелле, хăшпĕр хуçалăхсенче шăп çапла - ĕçшĕн тÿлес ыйтăва тивĕçлипе йĕркелеме пултарайманни газ кĕртессине чăрмантарать. Канашлура çак ыйтăва татса пама сĕнекен çул-йĕрсенчен ĕçшĕн выльăх-чĕрлĕх продукцине сутнă шутран тÿлемеллине тепĕр хут палăртрĕç.

Условисем туса парсан, вăхăтлă тÿлесен, подрядчиксен ĕçе хăвăрт вĕçлеме май пур. Сăмахран, хресченсен хуçалăхĕсен "Татарстан", "Тан", "Урняк", "Кондурча" ассоциацийĕсенче, сĕт-çу комбиначĕн хушма хуçалăхĕнче газ кĕртессине, тĕпрен илсен, кăçал вĕçлеме пулать, çутçанталăк газĕпе çыхăнтарас ĕçсен пысăк калăпăшне "Тĕрнеç", "Алга", "40 лет Победы", "Заветы Ильича" ассоциацисенче те пурнăçлама палăртнă. Хальхи вăхăтра вĕсенчен чылайăшĕнче хĕрÿ ĕç пырать, хăш-пĕринче вара вак-тĕвек çитменлĕхсене пула вун-вун çурта тата хваттере "сенкер" топливо парасси тытăнса тăрать. Кĕскен каласан, район ертÿçисем газификацие хăвăртлатас тесе мĕнпур вăйне хураççĕ, ĕçе пысăк хастарлăхпа пуçăннă подрядчиксем те чăрмавсем пулмĕç тесе шантараççĕ. Çак задачăна вырăнсенче пысăк тимлĕх уйăрсан, палăртнă тĕллеве пурнăçлама çине тăрса тăрăшсан, 1998 çул районта газ кĕртессинче пысăк утăм тунин çулĕ пулса тăмалла.

## Эсир РУЭСпа договор тунă-и?

Районти çыхăну ĕçченĕсен ĕçĕ çителĕклĕ пулин те, çак кунсенче вĕсен çумне тата тепре хушăннă: электроçыхăну управленийĕ хăйсен абоненчĕсемпе çулталăк договорĕсем тăвать. Çак ĕçе республикăра пур çĕрте те ирттереççĕ. Пĕлтĕр çулталăк пуçламăшĕнче эпир çырнă бланкăсенчен кусем урăхларах. Пĕрин çинче договор, иккĕллĕ хутлатнă мăшăр листасенче вара заявлени. Кунта вара хушаматпа ята, ашшĕ ятне, адрес, услугăшăн мĕнле майпа тÿлемеллине (паллах, аларан ĕнтĕ), тÿлемелли срока (РУЭС аса илтерет: кашни уйăхăн 25-мĕшĕччен) палăртмалла, аяла вара алă пусмалла... Договорта абонентăн хуласемпе çыхăнмаллине, кăмăл пулсан "8" кĕртмеллине те кăтартмалла. Сăмах май каласа хăваратăп, унпа усă курсан калаçу йÿнерех тухать. Кунта çаплах телефон номерне, абонент устройствин типне пĕлтермелле. Вăхăт пĕр вырăнта тăмасть вĕт, телефон аппарачĕсем çумне модемсем, факссем тата ыттисем те тахçанах хушăннă.

Абонента çак ларутăрура электроçыхăнăвăн дежурнăйĕ пулăшĕ, вăл çырса хатĕрленĕ документсене кăтартĕ, кирлĕ пулсан сĕнÿсем парĕ. Эпир сăнанă тăрăх, хулара пурăнакансем икĕ бланка та пĕр сăмахсăрах çыраççĕ: йĕрки çапла вĕт, ăна вара пăхăнмалла. Телефон кăна лайăх ĕçлетĕр, лини çинче кăлтăксем ан пулччăр.

1998 çула эсир РУЭСпа договор тунă-иха? Васкăр. Хăвăрпа пĕрле паспорт илме ан манăр, мĕншĕн тесен заявленире унăн номерне, серине, паспорта хăçан панине палăртмалла. Çăмăллăх пур пулсан, ăна çирĕплетекен удостоверени те пулмалла.

Т.АЛЕКСЕЕВА.

## КУН хыççăн КУН

### Тутарстан поэчĕсен саламĕ

Чăваш радион тĕп редакторĕ Порфирий Васильевич Афанасьев çак кунсенче пысăк чыса тивĕçнĕ - Чăваш халăх поэчĕ пулса тăнă. Çавна май ун ячĕпе ăшă сăмахсем нумай пынă. Акă, Тутарстанри поэтсем, çав вăхăтрах унти парламент депутачĕсем - Ренат Харис, Ренат Мухамадиев (Тутарстанти Писательсен союзĕн ертÿçи), Ренат Минуллин тата Гарай Рахим Порфирий Васильевича саламласа телеграмма янă. Çакна каламалла: П.Афанасьев Тутарстанри ĕçтешĕсен ентешĕ. Вăл Çарăмсан районĕнчи Çĕнĕ Йĕлмелĕ ялĕнче çуралнă. Çапла, Порфирий Афанасьев - пирĕн республикăран тухнă тăваттăмĕш Чăваш халăх поэчĕ.

### Тĕп конвейер ĕçлемест

"КамАЗ" акционер обществин тĕп конвейерне январĕн 1-мĕшĕнчен чарса лартнă. "ОКА" çăмăл машинăсем пухакан лини те пур хăватпах ĕçлеймест, уйăхра 100 машина кăларать. Сăлтавĕ - комплектлакан пайсене туянма укçа çукки. Поставщиксем умĕнчи парăм 500 миллион (çĕнĕ укçапа) тенкĕрен иртнĕ. "КамАЗ" декабрь уйăхĕнче мĕнпур хăватне пухса начар мар тăрăшнă - уйăх планне 130 процент пурнăçланă, пĕр уйăх ĕç укçине тÿлесе татнă. Анчах та ĕç укçин парăмĕ калама çук пысăк-ха.

Тутарстан правительстви шантарнипе "КамАЗ" "Альфа-банкран" 50 миллион доллар паман. Çак кунсенче производствăна хута ярасшăн. Ку вăл - юсав пайĕсене кăларма тытăнасси. Вĕсене туянас текенсем йышлă, çавăнпа та предприяти юсав пайĕсене кашни уйăхра 120 миллион (çĕнĕ укçапа) тенкĕлĕх кăларма шутлать. Çакă тĕп конвейера хускатмалли тĕп никĕс пулса тăрать.

Николай МИЛОВ.

## Ветерансем канăç пĕлмеççĕ

Нумаях пулмасть районти культура çуртĕнче "Ветеран" клубăн членĕсен черетлĕ тĕлпулăвĕ пулчĕ. Хальхинче ăна аслисене, фронт çулĕсене иртнисене хисеплесе йĕркеленĕччĕ. Сĕтел хушшине вăтăр çын ытла пуçтарăнчĕ, вĕсем вăрçă çулĕсене, çапăçу хирĕсенче выртса юлнă юлташĕсене аса илчĕç, фронтри юрăсене юрларĕç. Паллах, шÿтсемпе ташăсемсĕр те иртмерĕ ĕнтĕ. Çаплах февраль тата март уйăхĕсенче çуралнисене саламларĕç, парнесем пачĕç. "Вăтă çынсен çулсем иртнĕ май пĕр-пĕринпе час-часах тĕл пулса калаçас килет вĕт. Этем килте кăна пурăнсан, питĕ хăвăрт ватăлать. Эпир вара клуб членĕсем хăйсене пĕччен ан туйччăр тесе тăрăшатпăр", - тет клуб председателĕ К.В.Изотова.

Клубăн ĕçлемелли ятарлă план пур, унта тĕрлĕ мероприятисем ирттерме палăртнă. Кĕскен каласан, пирĕн ветерансем канăç пĕлмеççĕ.



Пуçламăш классенче вĕрентме пĕр енчен йывăр, тепĕр енчен вара интереслĕ. Пĕчĕк ачасем çырман кĕнеке пекех вĕт, пĕрремĕш страницисене унта пуçламăш классене вĕрентекен учительсем çыраççĕ. Шăпах вĕсем ачасене пĕлÿсен пысăк та илĕртÿллĕ тĕнчипе паллаштараççĕ, пĕрремĕш класра вĕренекенсемпĕн чăн-чăн авторитет пулса тăраççĕ. Çавăнпа та лара-тăра пĕлмен, пурне те пĕлме тăрăшакан ачасем хăйсен пĕрремĕш учителĕпе питĕ çывăхланаççĕ, ăна юратаççĕ.

Çĕнĕ Элметри вăтам шкул учительници Фануза Шарифулловна Нуретдинова та, педагогика училищине вĕренсе пĕтернĕ хыççăн 9 çул пуçламăш классене вĕрентекенскер, çавăнпа телейлĕ. Вăл ачасемпĕн иккĕмĕш амăшĕ пекех. Фануза Шарифулловна та хăй вĕрентекен ачасене юрататать, вĕсене ăнланса, пĕрле ĕçлеме пĕлет. Професси ăсталăхĕшĕн, ачасене вĕрентмелли методикăна лайăх пĕлнĕшĕн Ф.Ш.Нуретдиновăна "Аслă учитель" ят панă.

Ÿкерчĕкре: Çĕнĕ Элметри вăтам шкулти пуçламăш классене вĕрентекен Ф.Ш.Нуретдинова.

## Паянхи номерте:

* Газификаци - тĕп тимлĕхре.
* РУЭС асăрхаттарать.
* Рынок çулĕ.
* Телепрограмма.
* Саламланисем. Пĕлтерÿсем.

